Иванов К.В. Хурӑн ҫулҫи; Хура ёне; Ҫӳл ту; Тӗвик-тӗвик текерлӗк : К.В. Иванов ҫырса илнӗ халӑх юррисем // Илемлӗ литература. – 1941. – № 2. – С. 27-29.

# К. В. ИВАНОВ ҪЫРСА ИЛНӖ ХАЛӐХ ЮРРИСЕМ

Чӑваш халӑхӗн илемлӗ литературин никӗсне хывса панӑ поэт **Константин Васильевич Иванов** хӑйӗн кӗске ӗмӗрне пӗтӗмпех тӑван халӑхӗн культурине ҫӗклессишӗн ҫунса ирттернӗ. Вӑл литературӑна кӑна мар, чӑваш халӑх хушшинче искусство ӗҫне пӗтӗмӗшпе: музыка, живопись т. ыт. те пуҫласа, аталантарса ярассишӗн нумай ӗҫленӗ. „Нарспие" спектакль лартса кӑтартасшӑн ҫуннӑ вӑл, ун валли декорацисем те ҫырнӑ. Музыка пирки вӑл Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫленӗ И. Я. Яковлевпа, унта музыкӑна вӗрентнӗ преподавательсемпе: Р. Н. Идобаевпа, И. М. Дмитриевпа, Ф. П. Павловпа та тем чухлех калаҫнӑ. Ахаль мар вӗсем Ф. П. Павловпа иккӗшӗ пит туслӑччӗ. 1908 ҫулта К. В. Ивановпа И. М. Дмитриев иккӗшӗ те И. Я. Яковлева чӑваш юррисен кӗнекине кӑларма („Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним") нумай пулӑшнӑ. К. В. Иванов вырӑсла юрӑсене те чӑвашла куҫарнӑ: „Сӑпка юрри", „Утес", „Отпустили крестьян на свободу", „Дубинушка" т. ыт. те. К. В. Иванов чӑвашран тухнӑ тепӗр музыкантпа пит туслӑ пулнӑ: вӑл — Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ учитель П. В. Пазухинччӗ.[1] П. В. Пазухин 1914 ҫулта Чӗмпӗрте чӑваш юррисен кӗнекин иккӗмӗш пайне („Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним", часть 2-я) кӑларчӗ. Ку кӗнекене кӑларас ӗҫре К. В. Иванов пит нумай ӗҫлерӗ. Акӑ ун пирки К. В. Иванов патне Чӗмпӗре П. В. Пазухин Чикме хулинчен 1912 ҫулхи ноябрьте янӑ ҫыру:

„Друже Константине! Что ты ничего не пишешь? Ведь я жду, бог знает, как! Пожалуйста, напиши, но только скорее. Как обстоят дела? Что мне делать? и где песни? Что поделывают товарищи? и что с Руссо? Пожалуйста, повторяю, напиши что-нибудь, хотя я понимаю, почему ты не пишешь. Передай поклон всем, кому можешь. Как идут практические занятия? Скажи Федору, чтобы он писал. Живу хорошо. На святки приехать не могу. Хочу устроить елку".

Ҫак „Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним" (часть 2-я) кӗнекере Белебей уездӗнче ҫырнӑ тӑватӑ юрӑ пур. П. В. Пазухин К. В. Ивановсем патӗнче 1909—12 ҫулсем хушшинче пӗр-ик хут та пулнӑ. К. В. Иванов вилсен те, ун тӑпри умӗнче пуҫ тайма П. В. Пазухин Слакпуҫне пырса

[1] П. В. Пазухин 1916 ҫулта империализмлӑ вӑрҫӑра вилнӗ.

кайнă. Вăт çав 1909—12 çулсенче П. В. Пазухин Слакпуçĕнче çав юрă кĕввисене çырса илнĕ. Сăввисене (сăмахĕсене) çырса илекенĕ К. В. Иванов пулнă. Вăл юрăсем ак çаксем: „Хурăн çулçи“ (5 стр.), „Хура ĕне“ (18 стр.), „Тĕвик-тĕвик текерлĕк“ (19 стр.), „Çŭл ту“ (22 стр.).

## ХУРĂН ÇУЛÇИ

Хурăн çулçи çурсассăн,
Килет вăрман илемĕ.
Хурăн çулçи тăкăнсан,
Каять вăрман илемĕ.

Хĕвел хĕрелсе тухсассăн,
Килет вăрман илемĕ.
Хĕвел анса ларсассăн,
Каять вăрман илемĕ.

Çырла çеçке çурсассăн,
Килет парлак илемĕ.
Çырла çеçке тăксассăн,
Каять парлак илемĕ.

Хурлăхан çеçке çурсассăн,
Килет çыран илемĕ.
Хурлăхан çеçке тăксассăн,
Каять çыран илемĕ.

Мăкăнь çеçке çурсассăн,
Килет пахча илемĕ.
Мăкăнь çеçке тăксассăн,
Каять пахча илемĕ.

Хирти курăк ешерсен,
Килет хирĕн илемĕ.
Хирти курăк типсессĕн,
Каять хирĕн илемĕ.

Хĕрсем урама тухсассăн,
Килет урам илемĕ.
Хĕрсем урамран кайсассăн,
Каять урам илемĕ.

Хĕвел хĕрелсе тухнă чух
Килет тĕнчен илемĕ.
Хĕвел анса ларсассăн,
Каять тĕнчен илемĕ.

Хĕрсем вăйя тухсассăн,
Килет урам илемĕ.
Хĕрсем вăйăран кĕрсессĕн,
Каять урам илемĕ.

## ХУРА ĔНЕ

Хура ĕне пăлан пек,
Хŭри вĕçĕ çĕлен пек.
Пирĕн тантăш пике пек,
Икĕ пичĕ чие пек[1].

Вăрăм сăрка пырĕ эпир,
Çавăнпа çинçе пулнă эпир.
Çарви çинчи кĕпçе эпир,
Çавăнпа яка пулнă эпир.

Çулçă айĕнчи çырла эпир,
Çавăнпа шурă пулнă эпир,
Аттен-аннен пĕр хĕрĕ,
Çавăнпа шухă пулнă эпир.

Сарă-сарă сарана,
Сарана нумай çинĕ эпир.
Сарă-сарă ан тийĕр,
Çавăнпа сарă пулнă эпир.

Парлак çинче çырлалăх,
Çырла нумай çинĕ эпир.
Шатра тесе ан калăр,
Çавăнпа шатра пулнă эпир.

Çŭл ту çинче чиелĕх,
Чие нумай çинĕ эпир.
Хĕрлĕ-хĕрлĕ ан тийĕр,
Çавăнпа хĕрлĕ пулнă эпир.

---

[1] Ун вырăнне „Икĕ куçĕ çăлтăр пек“ тесе те юрлаççĕ. (Кĕнекери сноска).

## ÇӐЛ ТУ

Çӳл ту çинче хурăнлăх,
Çинчен милĕк суйлар-и те,
Тĕпне хăйлăх тăвар-и?

Вăрман хĕрри юманлăх,
Çинчен икел суйлар-и те,
Тĕпне юпа тăвар-и?

Вĕт вăрманта шĕшкĕлĕх,
Çинчен мăйăр суйлар-и те,
Тĕпне тенкел тăвар-и?

Ту питĕнче чиелĕх,
Çинчен чие суйлар-и те,
Тĕпне çатан авар-и?

Парлак çинче çырлалăх,
Çинчен çырла суйлар-и те,
Тĕпне утă тăвар-и?

## ТĔВИК-ТĔВИК ТЕКЕРЛĔК

— Тĕвик-тĕвик текерлĕк, текерлĕк,
Ăçта каян, текерлĕк, текерлĕк?
— Çуртăм патне каятăп, каятăп.
— Санăн çурту ăçтарах, ăçтарах?
— Тула пуççи айĕнче, айĕнче.
— Çурту çине мĕн витнĕ, мĕн витнĕ?
— Хăмăш касса хуп витнĕ, хуп витнĕ.
Пусса улăхма пусми çук, пусми çук,
Тытса улăхма тытки çук, тытки çук.